# Украина ывăлĕ

Петĕр Хусанкайпа юлашки курнăçнине астумастăп эпĕ. Унпа эпир нумай тĕл пулнă: Кейӳре те, Шупашкарта та, Мускавра та. Чăваш халăхĕн чаплă поэчĕпе кашни тĕл пулмассерен эпĕ хама пысăк та ачаш чунлă, хастарлă та ĕçчен халăхпа курнăçнăн туяттăм. Сăвăçра эпĕ хальхи чăн-чăн: чăваш сăнне, унăн шухăш-кăмăлĕн чи паллă енĕсене кураттăм. Çапла, юлашки тĕлпулăва астумастăп. Ку ахальтен мар-тăр. Юлашки курнăçу пулман. Поэт яланах манăн чĕрере, вăл пирăнтен уйрăлса кайнине эпĕ ĕненмен те, ĕненес те çук. Эп пĕлетĕп: вăл пулнă, пур, пулать те.

Пĕрремĕш тĕлпулу вара - куç умĕнчех. Остер хулинче паллашрăмăр унпа. Чернигов тăрăхĕнче. 1952 çулта пулчĕ вăл. Кашнин куçĕ умĕнчех вăрçă çулăмĕ явăнатчĕ ун чухне, çав хушăрах пурне те мирлĕ ĕç пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕччĕ. Хамăрăн аслă Çĕнтерӳ пире хавхалантаратчĕ, халăх хуçалăхне çĕклессишĕн вăй хума, нумай нациллĕ совет культурине, литературине аталантарассишĕн ырми-канми ĕçлеме хистетчĕ.

Аслă вăрçă вăхăтĕнче пĕр çемьене пĕрлешнĕ совет çыннисем Çĕнтерӳ хыççăн та пĕр-пĕрне манмарĕç, тата çирĕпрех алă пачĕç те çĕнĕ çĕнтерӳсем патне малалла утрĕç. Вăрçă çулĕсенчен халăхсен сăхă тăшмана часрах çапса аркатас тĕллев тĕпре пулнă пулсан, халĕ вара вĕсем, алла-аллăн утнă май, пĕр-пĕрин йăли-йĕркине те тишкерчĕç, ĕмĕрхи пурнăçĕпе мал ĕмĕтне сăнарĕç, кĕскен каласан, пĕр-пĕрне чунтан, малтанхинчен те тарăнраххăн ăнланса илчĕç. Çавна май тĕрлĕ халăхăн тĕрлĕ çыннисем хушшинче ĕçлĕхлĕ, пархатарлă çыхăнусем тĕвĕленчĕç, куллен малалла аталанчĕç.

Атăл хĕрринче пурăнакан чăвашсен Днепр тăрăхăнчи халăхпа çыхăну тытма ĕлĕкхи сĕм тĕттĕмлĕхре майсем пулман, темелле. Анчах

украинецсем чăвашсен хĕн-хурлă пурнăçĕ çинчен Тарас Шевченкоран пĕлчĕç, чăвашсене вара чухăн украинецсен асапĕ-инкекĕ çинчен чăвашсен хурăнлă çулĕпе Çĕпĕр каторгине ăсанакан Устим Кармелюкăн чăнкăр-чăнкăр сăнчăрĕ евитленĕ. Çĕнĕ саманан шурăм-пуçĕ çутăлса кайсан, Украинăна советлă чăваш халăхĕн уçă чунне, пуян шухăш-кăмăлне витĕрех кăтартакан чĕкеç - Çеçпĕл Миш-ши - вĕçсе килчĕ.

1952 çулта Çеçпĕл сарăмсăр вилнĕренпе 30 çул çитнĕччĕ. Украина писателĕсен Союзĕ çĕртме уйăхĕн варринче, Чернигов тăрăхĕнчи çуллахи чи чаплă вăхăтра чăвашсен вилĕмсĕр поэчĕн тăприне тирпейлесе-упраса усракансен тĕлпулăвне йĕркелерĕ. Ун чухне Остерта Украина совет литературин чаплă ăстисем - Максим Рыльский, Владимир Сосюра, Андрей Малышко тата ыттисем - пухăнчĕç.

Шăпах çавăн чухне эпĕ чăваш халăхĕн паллă деятелĕпе, республикăри писательсен Союзĕн председателĕпе Петĕр Хусанкайпа пуçласа тĕл пултăм. Вăл чăваш çыравçисен ушкăнне ертсе пыратчĕ.

Паллах, чăваш писателĕсем Çеçпĕл вилтăпри çине вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та пырса çӳренĕ. Анчах та кăмăлăма никам та Хусанкай пек пăлхатманччĕ.

Петĕр çине пăхнăçем пăхас килетчĕ: çӳллех марччĕ вăл, кăкăрĕ анлăччĕ, пĕвĕ кервенччĕ, кашни хусканăвĕ килĕшӳллĕ те витĕмлĕччĕ, мăнаçлăн та çирĕппĕн утнине пула тата патвартарах курăнатчĕ. Çаврака сăн-пит, кĕре ӳт, йĕпкĕн хура çӳç, хăмăр куç… Вăл ăшшăн, çав хушăрах витĕр пăхатчĕ, хăйĕн кăмăллă куллипе тыткăна илетчĕ. Украинăшăн çапăçса уксах юлнăччĕ сăвăç, анчах уксахласса та хăйне евĕр уксахлатчĕ: унăн уттинче шеллеме-хĕрхенме ыйтакан нишлĕх тĕсĕ те çукчĕ, вăл çĕр çинче мăнаçлăн утса çӳретчĕ, кашни утăмĕнче кăмăл çирĕплĕхĕ яр-уççăн палăрса тăратчĕ.

Хусанкая малтанхи хут курсан пуçăмра çак шухăш вĕлтлетсе илчĕ: ара, ку чăваш Байронĕ-иç! Акăлчансен аслă поэчĕ пекех хитре те тăнлă!

Илемлĕ пулас тесе хăй хăтланнăран мар, ахалех илемлĕ, çутçанталăк пилĕпе илемлĕ. Çак шухăш ăшăмра яланлăхах тĕвĕленчĕ пулас, вăл мана паян кун та канăç памасть: чăн та, Хусанкай поэтра та, Хусанкай-çынра та темĕнле байронла уйрăмлăх пурччĕ, çав уйрăмлăх ăна пиншер çын, çĕршер çыравçă хушшинче палăртса тăратчĕ. Тунма çук, чылай чухне пирвайхи шухăш суя пулать. Анчах хальхинче апла пулмарĕ. Çавăнпа та эпĕ Петĕр Хусанкай пирки никам та хăйĕн малтанхи шухăшне улăштарман пуль тетĕп. Вăл питĕ пысăк туйăмлă, çиçĕмлĕ эрудициллĕ, калама çук талантлă поэтчĕ. Мана вăл хăйĕн тата хăйне çывăх çынсен хакне лайăх пĕлнĕн туйăнатчĕ, анчах, темле пулсан та, сăвăç нихçан та çын çинче хăйне хăш енчен те пулин маларах хума шутламастчĕ.

Ун чухне Украинăра ăшă та ырă кунччĕ, Остерăн хăйăрлă урамĕсем хуллен кăна пăсланатчĕç, пĕтĕм хула ешĕл çулçă айне пулнăччĕ, лăпкă шывлă Десна енчен уçă вăркăш килетчĕ... Чăн та кунĕ ĕмĕр асра юлмаллиех ĕнтĕ. Петĕр Хусанкай çынсене тĕсесе тишкĕретчĕ, уяври хаваслă ушкăн сассине тăнлатчĕ, такама шыранăн енчен-енне пăхатчĕ.

Паллах, вăл Çеçпĕл çинчен шутлатчĕ. Ун куçĕ умне юратнă поэт вышкайсăр йывăр та тек нихçан таврăнми паттăр вăхăтра çакăнта, Остер урамĕсенче хăйĕн выçлăх пăвакан Тăван çĕршывне тунсăхласа çӳрени курăннă.

- Çеçпĕл маншăн вĕрентекен çеç мар, - тсрĕ ун чухне Хусанкай, - вăл ман аслă пичче, чун тĕкĕрĕ, куç.

Кайран кашни тĕл пулмассерен калаçăвăмăр Çеçпĕлрен пуçланатчĕ.

- Пирĕн Мишша мĕнлерех унта? Сукмакĕ курăкпа хупланмасть-и?

Çеçпĕл ячĕ Украинăра çуллен-çул анлăрах сарăлни ăна чунтан савăнтаратчĕ, куçĕ ăшă та илĕртӳллĕ çутăпа йăлтăртататчĕ... Чăваш

çыравçисен сăввисем, калавĕсем украинла тухнине вăл яланах чи малтан Çеçпĕл ячĕпе çыхăнтаратчĕ.

- Украина çулне пире Мишша уçса пачĕ, пирĕн аслă туслăх сăпкине те вăлах сиктернĕ, - тетчĕ вăл.

Хăй вара çав туслăха çирĕплетес тесе пĕтĕм вăйне хуратчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Украина ирĕклĕхĕшĕн çапăçни çинчен мĕн тери пăлханулла калатчĕ вăл, калатчĕ çеç мар, çыратчĕ. Вăрçă сăввисем ун пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Вăл украина литературине тĕлĕнмелле лайăх пĕлетчĕ, чунтан хаклатчĕ.

- Çеçпĕл Покрышень урлă украина литературин пĕчĕк пайне çеç пĕлнĕ, Шевченко генине те пĕтем халлĕн курман вăл, - тенеччĕ Хусанкай. - Эпир вара, Çеçпĕл ĕçне мала тăсакансем, хăватлă поэзи океанĕ умне тухса тăтăмăр. Шевченкоран Тычина таран...

Вăл Павел Григорьевич Тычинăна питĕ юрататчĕ. Вăрçăчченех паллашнăскерсем, вĕсем мĕн ĕмĕр тăршшĕпех туслă пурăнчĕç. Кейĕве çитсен-тусан, Петĕр часрах Тычинăна курасшăн хыпăнатчĕ. Павло Григорьевич та чăваш поэтне питĕ юрататчĕ, вăл çырнисене пысăка хурса хаклатчĕ.

Вĕсен калаçăвне пĕр хут çеç мар итлеме тӳр килнĕ манăн. Ун пек чухне Павел Григорьевича палласа илме те çукчĕ - хăпартланатчĕ вăл, хаваслăччĕ, чăваш халăхĕ çинчен ыйтнăçемĕн ыйтатчĕ, чăваш поэчĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ытларах пĕлесшĕн çунатчĕ. Хусанкай вара улшăнса çĕнелнĕ Çеçпĕл çĕршывĕ çинчен савăнсах каласа паратчĕ, куçĕсенчи чĕрĕ хĕлхем вылятчĕ.

Тычина патĕнчен тухсан Хусанкай чылайччен лăпланаймастчĕ, калаçу йĕрĕнчен тухаймастчĕ.

- Мĕн тери пысăк поэт сирĕн Тычина, мĕнешкел кăмăллă этем, -тетчĕ. - Тăван пиччепе калаçнă пекех калаçатпăр-çке-ха... Ĕмĕтленме пултарнă-ши çакăн çинчен Мишша?

Пĕррехинче эпĕ Хусанкая Çеçпĕл çинчен роман çырма тытăннине пĕлтертĕм. Мана кун çинчен сăмах хускатма лайăххах та марччĕ; чăваш поэчĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен чăваш çыравçисен каласа памаллаччĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та мана вĕсем ӳпкелессĕн туйăнатчĕ.

Анчах Хусанкай вара манăн иккĕленчĕк шухăшсене чăл-пар кăна салатса ячĕ. Çеçпĕл чăваш çеç мар, украинец та, терĕ вăл. Ăна украина халăхĕ чăвашсемшĕн чи йывăр вăхăтра ывăллăха илнĕ, украина çĕрĕ ăна халĕ те хăй кăкăрĕнче усрать, апла-тăк, украина писателĕсем Çеçпĕле манманни пире савăнтарать кăна.

«Çеçпĕл» романра эпĕ поэтăн Украинăри тапхăрне çеç илсе кăтартрăм. Унăн пуян пурнăçĕн ытти тапхăрĕсем çинчен пĕр произведени анчах мар çырăнĕ-ха.

Эпĕ Çеçпĕл çинчен çырнине Хусанкай пысăк хак пачĕ, вăл çеç мар, чăвашри ытти юлташсем те манăн ĕçпе интересленсех тăчĕç, материал пухма, поэтăн кăткăс характерне, йывăр вăхăта ăнланса илме пулăшрĕç.

Çеçпĕл çурхи пĕрремĕш чечек пулни çинчен Хусанкай час-часах асăнатчĕ. Мухтатчĕ вăл çав чечеке, вăл шутсăр сахал ларнишĕн кулянатчĕ.

- Çирĕм икĕ çул анчах пурăнса кам çавăн пек тарăн йĕр хăварнă-ха поэзире, кам сасси халăх умĕнче аслă йыхравăн янранă, кам çавнашкал кăткăс ыйтусем тупсăмне уççăн, татăклăн ăнлантарма пултарнă? Çук, нумаях мар ун пеккисем. Çеçпĕл - чăваш поэзийĕнче чечекленӳ пуçламăшĕ...

Петĕре çак шухăш канăç памастчĕ: Çеçпĕлĕн хурăç шанчăклă ĕмĕтне пурнăçа кĕртессишĕн тивĕçлипе кĕрешет-и-ха вăл? Ытти чăваш поэчĕсем епле ĕçлеççĕ?

Ир, питĕ ир уйрăлса кайрĕ пирĕнтен Петĕр Хусанкай. Вăл хăй таланчĕн чи анлă та чи çӳллĕ орбитине тухнăччĕ. Мĕн чухлĕ ырă шухăш, ылтăн ăс-хакăл кайрĕ унпа пĕрле. Çапах тăван халăхшăн, мĕнпур совет литературишĕн нумай тăрăшрĕ, нумай ĕçлерĕ. Вăл Çеçпĕле малалла аталантарчĕ. Çеçпĕл юр-тан тасалнă вăрманти пĕрремĕш чечек пулсан, Хусанкай - Атăл хĕрринче, пĕтĕм совет çĕрĕнче тата чикĕ леш енче шăтса ӳснĕ чечексен ыр кăшăлĕ.

Украина кинематографисчĕсем Çеçпĕл çинчен фильм тăвассине пĕлсен, Хусанкай, йывăр чирпе асапланатчĕ пулин те, йăлт улшăнчĕ, пĕчĕк ача пек савăнса кайрĕ. Куçĕнче каллех байронла хĕлхем йăлтăртатрĕ.

- Çапла, Çеçпĕл вилĕмсĕр. Халăх пекех, унăн чунĕ пекех...

Хăйĕн пур вăй-халĕпе, таланчĕпе Хусанкай çав вилĕмсĕрлĕхе вăйлатрĕ. Çавăнпа та ăна Чăвашра çеç мар, çĕршывĕпех юратаççĕ, асăнаççĕ. Вăл - поэзи кĕрекинче. Юратать Хусанкая Украина.

Асĕнчен кайми Çеçпĕл çинчен Хусанкай хĕрӳллĕн, хавхаланса калаçатчĕ. Пĕр сăввииче вăл чăваш поэтне ватă Днепр усрава илни çинчен каланă. Халĕ шутлатăп та - Хусанкай та Украина ывăлех. Вăл - Çеçпĕлпе юнашарах.